

# МЕДИА – пирĕн чунра



Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Светлана Чикмякова



Медиацентра çӳрекенсем.

## Хаçата çыраççĕ, соцсетьсенче аталанаççĕ

**Паян, цифра ĕмĕрĕнче, пирĕн чунсене медиа чăннипех те çирĕппĕн кĕрсе вырнаçса ларчĕ. Уйрăмах ачасем ун «чĕлхине» аван ăнланаççĕ. Паллах, ытларах электронлине. Анчах та кĕçĕннисем пичет сăмахне те сивлемеççĕ. Интернетра, социаллă сетьсенче хăйсене тупма тăрăшнипе пĕрлех заметка-очерксем те шăрçалаççĕ.**

Çак сăмахсене Санарпуçĕнчи вăтам шкул ачисем пирки те калама пулать. Кунта вунă çул ытла ĕнтĕ «Çамрăк журналист» кружок ĕçлет. Ячĕшĕн çеç йĕркеленĕ пĕрлешӳ мар вăл, ачасем унта хаçатсем валли чăн-чăн заметкăсем, статьясем çырма вĕренеççĕ. Иртнĕ çул вĕсемпе мастер-класс та ирттерме тӳр килнĕччĕ. Вĕренекенсем ун чухне хăйсен ăсталăхĕпе чăннипех тĕлĕнтернĕччĕ. «Çĕнтерӳ çулĕнче» Санарпуç шкулĕнче вĕренекенсен ĕçĕсем пĕрре мар пичетленчĕç: «Шкул сасси» проект йĕркипе те, ахаль те.

Ку ĕçре, паллах, педагогсем шкул ачисене тĕрĕс шухăшлав, тĕрĕс утăм, пысăк ĕç тума пулăшни пĕлтерĕшлĕ. Санарпуçĕнче ку йыша чăннипех те пултаруллă та маттур медиаучительсем пуçтарăннă – чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем Ирина Геннадиевна Семенова тата Раиса Николаевна Ермошкина, директорăн воспитани ĕçĕпе тимлекен заместителĕ Галина Геннадьевна Федорова тата директор советникĕ Юлиана Никифорова.

Вĕсем кăтартса-ăнлантарса пынипе паян ачасем хаçатçăсем пулма, социаллă сетьсене аталантарма вĕренеççĕ.

Паллах, шкулта медиацентр ĕçленин усси те пысăк. Ача малашлăхра журналистикăна суйласа илмесен те кирек мĕнле отрасльте те ăна çăмăл пулать: чĕлхе, çырав аталаннишĕн, компьютера аван ăнланнишĕн.

– Вĕренекенсенчи ырă ылмашăва аванах сисетпĕр. Кружока çӳрекен ачасем чăннипех те хастар, хăюллă, хăйсен шухăшне ăнлантарма пĕлеççĕ, – пĕлтерет Раиса Николаевна Ермошкина.





Г.Федорова тата Р.Ермошкина.

Анна Никифорова, Эвелина Краснова, Любовь Ермошкина, Елизавета Бардасова, Анастасия Семенова, Дарья Александрова, Елена Смирнова, Дарья Родионова, Анна Семенова, Карина Егорова, Мария Скворцова – акă вĕсем Санарпуç шкулĕн медиахастарĕсен пĕр ушкăнĕ. Пултаруллисен списокне татах тăсма пулать.

Шкулăн çамрăк журналисчĕсем кăçал регионсем хушшинчи «МедиаВзлет» фестивале те çĕкленӳллĕ кăмălпа хутшăнчĕç. «Чи лайăх медиацентр» номинацире тупăшрĕç. Çĕнтерӳçĕсен йышне лекеймерĕç пулин те çакă вĕсене ăсталăха ӳстерме, малалла тата та тĕллевлĕрех талпăнма май пачĕ.

Ачасен ушкăнри юлташĕшĕн мухтанмалли пур. Любовь Ермошкина, акă, «МедиаВзлетăн» çĕнтерӳçи пулса тăчĕ! Унăн чăвашла çырнă ĕçне «Чи лайăх пичет публикацийĕ» номинацире чи лайăххи тесе палăртнă. Чăнахах маттур!

«Çамрăк журналист» кружока çӳрекенсем «Переменка» электронлă хаçат кăлараççĕ. Вăл кăсăклă та пуян пултăр тесе пурте чунтан тăрăшаççĕ, çыраççĕ, ӳкереççĕ, пĕрле сӳтсе яваççĕ.

Ачасем пирĕн «Çĕнтерӳ çулĕпе» кăна мар, «Тантăш» хаçатпа та тачă çыхăну тытаççĕ, хăйсен ĕçĕсене унта та пичетлеççĕ. Хастарлăхне кура республика журналисчĕсем те вĕсем патĕнче пулса интервьюсем илеççĕ.

Медиацентр активисчĕсем шкулта иртекен мĕнпур мероприятие хутшăнаççĕ. Пулăмсене аван çутатаççĕ.

Кăçал вĕсем «Салтак патне – çыру!» акцире те пуçарулăхпа палăрчĕç. Çĕршыв хӳтĕлевçисене чĕререн тухакан сăмахсене çырса хавхалантарчĕç, тав турĕç.

Санарпуç шкулĕн ачисем чăнахах пултаруллă. Çак пултарулăха татах та ӳстерме, тĕрлĕ енлĕ аталанма вĕсене информаци технологийĕсем те аван пулăшаççĕ. Учрежденире уçнă «Ӳсĕм точки» центр çамрăк журналистсене самай пулăшать: компьютерсем хăватлă, квадрокоптер, фотоаппарат пур...

Пирĕн шухăш, паллах, ку ачасене хăшне те пулин журналистсен ретĕнче курасси...

**Светлана ЧИКМЯКОВА**



Ачасем «Çĕнтерӳ çулĕпе» туслă.

## «МедиаВзлет» – пултаруллă ачасен фестивалĕ

**Çĕршыв пуласлăхĕ – çамрăк ăрура. Пирĕн чăннипех савăнма сăлтав пур – пултаруллă та анлă тавракурăмлă ачасем ӳсеççĕ. Çакна Шупашкарти «Эткер» ача-пăча пултарулăх çуртĕнче иртнĕ регионсем шайĕнчи «Медиавзлет» фестиваль те аванах çирĕплетрĕ. Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен 100 ытла ача пĕр площадкăна пухăннă. Çамрăк корреспондентсем маттурах вара! Интернет уçлăхĕнче ятарлă блогсем те ертсе пыраççĕ, шкул хаçачĕсем те кăлараççĕ, медиапроектсем те хатĕрлеççĕ...**

Фестиваль чăннипех асра юлчĕ. Ачасене паллă пулăмпа Чăваш ен Пуçлăхĕ Олег Николаев, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Анатолий Аксаков, цифра аталанăвĕн министрĕ Михаил Степанов, Марий Эл Республикинчи культура министрĕ Михаил Матвеев тата ыттисем саламларĕç.

– «Медиавзлет» фестивале пĕрремĕш хут ирттеретпĕр пулин те, вĕренекенсенчен 500 ытла заявка килчĕ. Чăваш Республикинчен кăна мар, çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен те. Ку, паллах, савăнтарать те, тĕлĕнтерет те, – тенĕччĕ уявра Олег Алексеевич.

Каласа хăвармалла, мероприятие Крым Республикинче, Чулхула, Оренбург, Самара, Тюмень, Ульяновск облаçĕсенче, ытти регионра пурăнакан ачасем те хутшăннă.

– Ӳссен эсĕ кам пулатăн? – тесе ыйтаççĕ аслисем час-часах ачапчаран. Михаил Степанов çамрăк ăрупа журналист профессийĕ пирки кăсăклансах калаçнă. «Творчествăлла пултарулăха искусство интеллекчĕ те, информаци технологийĕ те ылмаштараймĕç. Сире пурне те ӳсĕм-çитĕнӳ тума сунатăп», – тенĕ вăл.

Фестиваль вăхăтĕнче ачасем валли мастер-классем йĕркеленĕ. Чăн та, медиапроектсем хатĕрлесси – кăткăс ĕç. Çĕршывăн тĕп хулинчен килнĕ хăнасем Анастасия Мироновăпа Антон Михалев, çамрăк корреспондентсен пĕрлешĕвĕн регионри координаторĕ Евгений Суховей, ЦУР специалисчĕ Анжелика Иванова, «Куча мала!» медиацентр ертӳçи Мария Шоклева, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн преподавателĕ Артем Гаврилов тата ыттисем журналистика енĕпе пĕлĕве тарăнлатма пулăшнă. Ачасене «Хыпар» Издательство çурчĕн фотокорреспонденчĕ Сергей Журавлев сăнсене илемлĕ ӳкерес енĕпе вăрттăнлăхсене уçса панă.

Фестивале пула çĕршыври талантлă ачасем пĕр чăмăра пухăннă. Чи кĕтнĕ те пăлхануллă самант – конкурса пĕтĕмлетни. «Чи лайăх пичет публикацийĕ», «Чи лайăх пичет кăларăмĕ», «Чи лайăх лонгрид», «Чи лайăх видеопроект», «Чи лайăх аудиопроект», «Социаллă сетьсенчи чи лайăх медиапроект», «Чи лайăх шкул медиацентрĕ» номинацисенче çĕнтерӳçĕсене тата призерсене палăртнă. Вĕсене дипломпа, Кубокпа чысланă, асăнмалăх парнепе хавхалантарнă.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**

Проект тăсăмĕ → 3–4-мĕш стр.